Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 74 (4643) *1998 çулхи июль (утă) уйăхĕн 1-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Кашни ĕç хăйне евĕрлĕ

### "Тухăç-98" пресс-группа пĕлтерет

Çумăрсем иртнине пăхмасăр, район хуçалăхĕсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли хатĕрлекен апат запасĕ ÿсет. Кăна юлашки 5-6 кун хушшинче хуçалăхсенче типĕ утă пĕр тонна ытларах ÿснĕ факт та çирĕплетет. Ĕнерхи кун тĕлне утă запасĕ 3,5 пин тонна ытла шутланнă. Чи нумай утă хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче хатĕрленĕ - 325 тонна. "Комбайн", "Татарстан", "Тан" хуçалăхсенче çак кунсенче утă запасĕ 100-шер тонна ÿснĕ. Вĕсенчен юлашки иккĕшĕнче, çаплах Хафизов ячĕпе хисепленекен, Кузнецов ячĕпе хисепленекен, РСУн Козлов ячĕпе хисепленекен хушма хуçалăхĕнче юлашки пĕр кун хушшинче 15-20-шер тонна утă хатĕрленĕ. Юлашки хуçалăхра утă запасĕ пит нумаях мар ĕнтĕ, анчах та вĕсем сенаж чи нумай - 450 тонна хатĕрленине палăртса хăвармалла. Мичуринецсем траншейăсене 380 тонна сĕтеклĕ апат хывнă. Анчах та "Заветы Ильича", "Черемшан", "Чулпан" ассоциацисенче, сĕт-çу комбиначĕн тата сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕсенче типĕ утă запасĕпе мухтанма пултараймаççĕ, çак ĕçре "Игенчепе" "Урнякра" та çаврăнăçулăх кăтартаймаççĕ. Юлашкинче АВМ активлă ĕçлет, кунта 17 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрленĕ ĕнтĕ. Анчах та районта çак паха апата хатĕрлекен 10 агрегата çеç хута янă. "Киклĕ", Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Родина" хуçалăхсенче вĕсемпе тухăçлă усă кураççĕ, киклĕсем ку ĕçре мичуринецсенчен иртсе кайма хатĕр. Шел пулин те хуçалăхсенчен чылайăшĕ çак майсемпе туллин усă курмаççĕ.

Путек милĕкĕн запасĕ палăрмаллах ÿснĕ. Ку иртнĕ субботниксемпе воскресниксен результачĕ. Анчах та "Заря", "Черемшан", "Игенче", "Тан" ассоциацисенче пĕр милĕк те çыхман.

"Родина", "Рассвет", "Татарстан" ассоциацисенче, сахăр завочĕн тата сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕсенче эмел курăкĕсене активлă хатĕрлеççĕ. Çак хуçалăхсенче эмел курăкĕсен запасĕ 7-9 тонна шутланать, ку енĕпе ĕç малалла пырать. Кĕскен каласан, хуçалăх ертÿçисем, выльăх апачĕ хатĕрлекенсем çутçанталăк условийĕсене шута илсе пур тĕрлĕ выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçсене йĕркелемелле. Тунтикун район администрацийĕнче иртнĕ канашлура та кун пирки конкретлă каласу пынă.

Пĕр хуçалăхран килнĕ хыпарсем

## 18-шар килограмм

Сĕт суса илеççĕ хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн дояркисем хальхи вăхăтра. Çулталăк хушшинче пысăк сăвăм тивĕçтерекенскерсем, вĕсем çуллахи тапхăрăн майĕсемпе ăнăçлăн усă кураççĕ. Доярккăсем хушшинчи ăмăртура Зинаида Михайловна Кузьмина малта пырать: вăл кăçалхи 5 уйăх хушшинче пĕр ĕнерен вăтамран 2373 килограмм сĕт суса илме ĕлкĕрнĕ. Хальхи вăхăтра талăкра пĕр ĕнерен вăтамран 19 килограмм сĕт сăвать. Ку ÿсĕме Зинаида Михайловна, çаплах выльăх пăхакан Юрий Александрович Яковлев тÿрĕ кăмăлпа вăй хунипе тивĕçтернĕ.

Людмила Николаевна Михеевапа Полина Семеновна Корчукован ушкăнĕнче те кăтартусем начар мар.

## Агрегат ĕçлет

Хальхи вăхăт тĕлне хуçалăхра 23 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрленĕ. Кунта чи малтан АВМ операторĕн Валентин Александрович Ефимовăн тÿпи пысăк. Агрегат пĕр кăлтăксăр ĕçлесе курăк çăнăхĕн запасне çителĕклĕ хатĕрлес тесе пĕтĕм вăйран тăрăшать.

С.КУЛЬМЕТЬЕВА,
экономист.



*Хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕ кăçал çураки вăхăтĕнче питĕ лайăх ĕçленĕ. Пĕрчĕллĕ культурăсен чи пысăк лаптăкне Радик Мангирович Мингазетдинов акнă. Çартан таврăннă хыççăн Радик хуçалăхра юлнă, питĕ шанчăклă та опытлă механизатор пулса тăнă. Юлашки çулсенче ака вăхăтĕнчи тĕп ĕçе шăпах вăл пурнăçлать. Тăрăшуллă та тÿрĕ кăмăллă яш ĕççене кăçал та пысăк хăвăртлăхпа тата паха иртттернĕ. Хирсем пĕр тикĕссĕн симĕсленни те çакнах çирĕплетет - калчасем лайăх шăтса тухса, çÿлелле çĕкленеççĕ.*

*Сăнÿкерчĕкре: хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕн механизаторĕ Р.М.Мингазетдинов.*

## Икĕ кунра - 50 тонна путек милĕкĕ

Хресченсен хуçалăхĕсен "Киклĕ" ассоциацийĕнче путек милĕкĕ хатĕрлес тĕлĕшпе икĕ кун субботник пулчĕ. Районта выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе пĕлтернĕ субботникпа воскресника ял ĕçченĕсемпе пĕрле хуçалăх правленийĕн, самоуправленин вырăнти Совечĕн, культура çурчĕн ĕçченĕсем те тухрĕç, шефа илнĕ предприятин - НУАД ĕçченĕсем тăрăшса вăй хучĕç. С.С.Хамидуллин инженер ертсе пынипе управлени представителĕсем путек милĕкĕ хатĕрлерĕç, ăна хăйсен КамАЗ автомашинипе турттарчĕç. Результатсем савăнтараççĕ: киклĕсем икĕ кунра 50 тонна путек милĕкĕ хатĕрлерĕç, ку вăл маларахри кунсенчинчен 47 тонна ытларах.

## Вăрах кĕттермерĕç

**Элмет кустĕнчи ялсене газификацилесси питĕ пысăк хăвăртлăхпа пырать.**

ЯЛСЕНЕ - ГАЗ

"Востокмонтаж" акционер обществин ертÿçисем çак ĕçе Отрадный хулинчи 2-мĕш номерлĕ СУ явăçтарнă, çакă, паллах, ĕçсене хăвăртлатассинче тÿрех палăрнă. Тĕрĕс ĕнтĕ, Пĕкĕлмери 4-мĕш номерлĕ монтаж управленийĕ, кунта газ кĕртме пуçланăскер, ĕçсен пысăк калăпăшне пурнăçлама ĕлкĕрнĕ. Çапах та Отрадный хулинчен килнĕ яшсем çаврăнăçуллăрах ĕçленĕ. Çак кунсенче тата икĕ ял халăхне савăнтарас тесе вĕсем çурçĕрччен ырми-канми вăй хунă. Результатсем куç умĕнчех: иртнĕ эрнекун Элметре 6 çурта газ кĕртнĕ, Зузеевăра - 5. Юлашки ялта газ пайлакан шкапа та лайăх паллăпа хута янă, çак кунсенче ытти çуртсем те сенкер топливăпа усă курма тытăнĕç. Вĕсен хуçисем вăхăта вăраха тăсмасăр чÿрече форточкисем вырнаçтарсан, пăрăхсене сăрласан, газовиксем, çакă чăрмавлă пулин те, вата çынсен çурчĕсенчи кивĕ маркăллă плитасене çутçанталăк газĕпе усă курма çĕнĕлле оборудованилĕç. Паллах, плитасене çĕннисемпе улăштарсан аван пулмалла, анчах пĕтĕмпех укçа-тенкĕрен килет.

Элмет ялĕнче чи малтан газ çĕнĕ типлă плитасем вырнаçтарнă çуртсене панă. Газовиксем тăрăшса вăй хунипе, хуçалăхăн çĕнĕ ертÿçи газификацилессине пысăк тимлĕх уйăрнипе тата пăрăхсене сăрлама ял халăхне явăçтарнипе, çаплах çак ĕçе правлени аппарачĕ хутшăннипе, Николай Пайгерчев ертсе пынипе "Нурлатгаз" ЭПУри слесарьсем хастар ĕçленипе пĕрремĕш ултă çуртра, пысăк шанăç çутисем евĕр, газ çуталнă.

Çапла майпа, Элмет кустĕнчи мĕнпур хуçалăхсенче вăрахчен кĕтнĕ çутçанталăк газĕпе çыхăнтарнă çуртсем пур тата ку енĕпе газовиксем малалла активлă ĕçлеççĕ. Тĕпрен илсен, Кăчăканлă ялĕнчи çуртсене газификацилессине июль уйăхĕнче пĕтĕмпех вĕçлессе шанăç пур.

## Комплекслă тĕрĕслев иртнĕ

**Иртнĕ эрнере сăрт-ту - техника надзорĕн Лениногорскри уйрăмĕ нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленире комплекслă тĕрĕслев иртттернĕ.**

Виçĕ çулта пĕрре ирттерекен тĕрĕслев, чăннипех комплекслă пулнă. Комисси сăрт-ту техникин требованийĕсене, ĕç сыхлавĕн, пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пурнăçланипе кăсăкланнă, бригадăсенче, ĕç вырăнĕсенче пулнă, рабочисемпе калаçнă, çавăнпа пĕрлех вĕсен професси хатĕрленĕвĕн шайне те тĕрĕсленĕ. Эрне хушши тĕрĕсленĕ хыççăн комисси членĕсем пурте çакăн пек шухăшпа килĕшнĕ: нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленире рабочисен профессине, производствăри культурăна ÿстерес, ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пысăк ĕç пурнăçлаççĕ, çакă пĕрлехи кăтартусенче те лайăххенчен палăрать, çавăнпа пĕрлех комисси Нурлатри нефтяниксем ку тĕлĕшпе çакăн евĕрлĕ предприятисем хушшинче ÿсĕмсем ытларах тунине палăртнă. Паллах, ĕç комиссийĕн членĕсем çитменлĕхсене те палăртмасăр хăварман. Çакăн пек пысăк предприятире вĕсем пурринчен тĕлĕнмелли те çук. Вĕсен пĕтĕçÿллĕ коллективĕшĕн çитменлĕхсене пĕтерессинче нимĕнле йывăрлăхсем те çук пулĕ.

## *Анат Кама - пĕлĕт хапхи*

"БЕГИШЕВО" - тĕнче пĕлтерĕшлĕ аэропорт пулса тăнă. Анат Камăри сывлăш порчĕ республикăра Хусан хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăрать. Ăна Кама тăрăхĕнчи промышленность зони варринче 1971 çулта уçнă. Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче çак пĕлĕт хапхи витĕр 12 миллион çын вĕçсе кайнă. Пĕлтĕр кунти аэровокзала çĕнетнĕ, вăл Европăри аэровокзалсенчен пĕрре те кая мар.

Çитес вăхăтра "Бегишево" аэропортĕнчен самолетсем Вăтам Азие, Кавказа, Крыма, Белоруçе вĕçме тытăнаççĕ. СНГсĕр пуçне, ытти çĕршывсене, чи малтан суту-илÿ тăвакан "челноксем" валли рейссем уçмалла.

## Нурлат-Хусан поезд

Иртнĕ эрне вĕçĕнче Нурлат-Хусан поезд каллех çÿреме тытăннă. Хальхинче вăл эрнере икĕ хут çÿрĕ - шăматкунсенче тата тунтикунсенче. Хусана малтанхи вăхăтрах - 17 сехет те 55 минутра хускалса каять.

# Ĕлĕкхилле пурăнма май çук

**Нумаях пулмасть ТР министрсен Кабинетĕнче иртнĕ анлă канашлура 4 уйăх хушшинче бюджетăн тупăш пайне пурнăçланă икĕ район хушшинче пĕри Нурлат районĕ пулнине пĕлтерчĕç. Ку енĕпе "Ватаным Татарстан" хаçат корреспонденчĕ Г.РИЗВАНОВ Нурлат районĕпе Нурлат хулин администрацийĕн пуçлăхĕпе Ф.С.СИБАГАТУЛЛИНПА телефонпа калаçнă.**

**- Фатих Саубанович, хальхи вăхăтри условисенче бюджетăн пĕрлĕхне упраса хăварма унăн тупăш пайне пурнăçлама мĕнле те пулин уйрăм мерăсем йышăнмалла-и?**

- Уйрăм çул-йĕрсемех çук ĕнтĕ. Ĕçлемелле. Бюджетăн тĕреклĕхне пурте пĕрле - тавар туса кăларакансем, налукпа финанс службисем, пенси фончĕ - тачĕ çыхăнса туслă вăй хурсан çеç упраса хăварма пулать. Пирĕн районта çакăн пек политика. Администраци пуçлăхĕ ертсе пыракан ятарлă комисси бюджета пурнăçланине, налуксем пуçтарнине тĕп тимлĕхре тытать, çак ĕçсене йĕркелесе тăрать, кирлĕ пулсан вара васкавлă мерăсем йышăнать. Районта вăл хисепре, бюджета пурнăçланинче те унăн тӳпи пысăк. Паллах ĕнтĕ, бюджетăн тупăш пайне ӳстермелли çĕнĕ çул-йĕрсем те шыратпăр. Кăçал районта маркетинг службин департаментне йĕркелерĕмĕр. Ял хуçалăх продукцине тупăшлă вырнаçтарса, вăл "чĕрĕ укçа" ĕçлесе илет, çапла майпа бюджета та укçа-тенкĕ кĕрет. Эсир асăрхарăр пулĕ, бюджетăн 70 процентне эпир "чĕрĕ" укçапа тивĕçтертĕмĕр. Ку вара - пысăк ĕç.

**- Пенси фондĕнче ĕçсем мĕнле?**

- Ăна та ĕçлемест тесе айăплама çук. Пенси фондне укçа-тенкĕ пуçтарассине пирĕн 53 процент пурнăçланă, урăхла каласан, республика шайĕнче. Вĕсене ӳстермелли мерăсем пăхса хăваратпăр, пенси шутĕнчен тĕрлĕ услугăсем памалли практика пурнăçа кĕртрĕмĕр. Пытармастăп, фондăн ăнăçлăрах ĕçлеме майсем пур, юлашки канашлусенчен пĕринче калаçу шăп çакăн çинчен пычĕ.

**- Паллă ĕнтĕ, бюджетăн тĕреклĕхне тупăш пайĕ кăна мар, укçа-тенке перекетлĕ тыткалани те тивĕçтерет. Юлашки тĕлĕшпе сирĕн мĕнле?**

- Тĕрĕс калатăр. Тĕслĕхрен, кăçал çутĕç ыйтăвĕсене пĕлтĕрхинчен 16 миллион тенкĕ сахалрах уйăрнă, шел ĕнтĕ, анчах мĕн тăвăнха? Штатсене йĕркене кĕртме тивет, тĕлсĕр тăкаксене пĕтеретпĕр. Самоуправленин вырăнти Совечĕсене централизациленипе 34 штат единицине кĕскетнĕ, пĕрлехи ĕçĕн кăтартăвĕсене ку пачах та тивмерĕ. Тĕрĕссипе каласан, эпир администраци аппаратне кĕскетнинчен пуçларăмăр. Хальхи вăхăтра пирĕн 4 пушă ĕç вырăнĕ пур, анчах та çынсене шутшăн çеç тытса тăма кирлĕ мар тесе шутлатпăр. Тĕслĕхрен, администраци аппарачĕн ертӳçи пур пулсан, йĕркелӳ пайĕн заведующийĕ мĕне кирлĕ-ха? Е наци ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен специалист? Нурлат - нумай нацилĕ халăх районĕ, тĕрĕс пултăр тесен специалист пулма мĕнле наци представительне лартмалла-ха? Специалист пулсан çакăн пек йывăрлăх та сиксе тухать, специалист çуктăк ыйту та çук. Нацисем пĕр-пĕринпе килĕштерни, пĕр-пĕрне хисеплени вара çынсен кулленхи ĕçĕнче çирĕпленет. Хула статусĕ улшăннă пулин те, хушма штатсем пирĕн çук. Хула пуçлăхĕ пирĕн мэр мар, администраци пуçлăхĕн хула тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ шутланать. Эпир хамăр çак принципа тытса пырсан, ыттисенчен те ыйтма çăмăлрах, вĕсем ăнланаççĕ. Кăçалхи ака вăхăтĕнче хресченсен хуçалăхĕсен "Элмет" тата "Татарстан" ассоциацийĕсене пĕрлештертĕмĕр. Сăлтавĕ? Элмет хирĕсенче 13 трактор ĕçлет, 4-шĕ ĕçсĕр тăраççĕ - механизатор кадрĕсем çук. Наряда пуçтарăннă 29 арçын вара çак 4 трактора мĕнле ĕçлеттерер-ши тесе пуç ватаççĕ. Хуçалăхсем пĕрлешсен ку йывăрлăх хăех пĕтрĕ. Халь ытти организацисемпе предприятисенче те çавăн пек ĕç пырать. Тĕслĕхрен, хуçалăхсем хушшинчи строительство организацийĕнче ĕç укçи фончĕн пĕрре виççĕмĕш пайĕ инженерсемпе техниксене ĕç укçи тӳлеме каять. Кунти рабочисен вăтам ĕç укçи 442 тенкĕ шутланать пулсан, инженерсемпе техниксен 911 тенкĕ. 53-мĕш СМУра та çапла, 140 рабочие 33 инженерпа техник тивет. Пĕрремĕшĕсен вăтам ĕç укçи 494 тенкĕ, иккĕмĕшĕсен вара 941 тенкĕ! Çакăн пек условисенче мĕнле ĕç тухăçлăхĕ кĕтмелле-ха? Кун пек юрамасть!

Çакăн пек çул-йĕрпе пырсан кашни отрасльте тӳрре тухман тăкаксене чакармалли майсем тупма пулать. Процентсăр ссудăсем те памастпăр, пенсисене те кĕнĕ укçа-тенке шута илсе çеç паратпăр. Вăтă çынсем айăплă мар, анчах укçана вăхăтлă куçарман организацисен пенсионерĕсене кăшт чăтма тивет. Бюджета планланă чухне цифрăсене ăнсăртран кăна илместпĕр, тĕрĕс даннăйсене тĕпе хума тăрăшатпăр, ку питĕ кирлĕ. Паллах ĕнтĕ, налук инспекцийĕ йĕркеллĕ ĕçлени, çирĕп ыйтни те пире нумай пулăшать. 5 уйăх хушшинче 54076 пин тенкĕ налук кĕчĕ, пуçтарса çитереймен укçа, пĕлтĕрхи çак тапхăрпа танлаштарсан, 43 процент чакрĕ. Пысăк налук тӳлекенсем - парăмçăсем закона пурнăçланине тĕрĕслес тĕллевпе налук посчĕсем йĕркеленĕ. Пилĕк уйăх хушшинче 93 предприятире уйрăм налуксем тĕлĕшпе налук законне пурнăçланине тĕрĕсленĕ, çавна май район бюджетне тата хушса 1098 пин тенкĕ укçа кĕнĕ. Налук инспекцийĕ налук полицийĕпе тачă çыхăнса ĕçлет.

Çапла майпа бюджета пурнăçлатпăр. Нумаях пулмасть район активĕпе иртнĕ канашлура та малашне финанс тĕреклĕхне сыхлас тĕлĕшпе уçă калаçу пычĕ. Малашне бюджета пурнăçласси ансат ĕç пулмĕ тесе шутлатăп, кăна ыттисем те ăнланаççĕ. Анчах та унăн тупăш пайне пурнăçлама пур мерăсене те йышăнмалла, çаплах укçа-тенке тĕллевлĕ, перекетлĕ тăкакласси тĕп задача шутланать. Пирĕн район активĕ çак политикăна ăнланнине, ăна тĕрĕс тесе шутланине, çак çул-йĕрпе пыма хатĕр пулнине кăмăллăн палăртатăп. Канашлу вăхăтĕнче эпĕ çакăн пек пĕтĕмлетӳ турăм. Кăна эпĕ малашне бюджета пурнăçламалли шанчăк тесе хак паратăп.

**("Ватаным Татарстан" хаçат, июнĕн 16-мĕшĕ).**

---

## Шкул çуменчи лагерьсене, канма

Кашни çул районти вĕрентӳ пайĕ çуменче "Подросток" кану лагерĕ уçăлать, унта экологипе туризм тĕлĕшпе тĕллевлĕ ĕç илсе пыраççĕ. Çаплах каникул вăхăтĕнче 1,2,3,4,5,7,8-мĕш номерлĕ шкулсен базисем çинче шкулсем çумĕнчи лагерьсем ĕçлеççĕ. Ялсенче каникул вăхăтĕнче ĕçпе канăвăн 38 лагерьне йĕркеленĕ, 7 шкулта вара - апат йĕркелемен ача-пăча площадкисем. Пĕтĕм лагерьсене калаçса килĕшнипе вĕрентӳ пайĕ урлă социаллă страхованийĕн Чистайри регионаллĕ фончĕ финанслать. Кунта ачасене апатлантарасси, культура мероприятийĕсен, ăшăтмалли материалсен тăкакĕсем кĕреççĕ.

Пĕр смена 21 кун пырать. "Мечта" (2-мĕш номерлĕ шкул), "Эврика" (3-мĕш номерлĕ шкул), "Мечта" (4-мĕш номерлĕ шкул) тата "Подросток" лагерьсенче ачасен канăвне туллин те интереслĕ йĕркеленĕ. Шкул çуменчи лагерьсем июль, август уйăхĕсенче те ĕçлĕç.

**Г.АГЛИУЛЛИНА, РОО методисчĕ.**

---

## Çĕнĕ председатель

**Июнĕн 16-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче пĕтĕм Раççейри суккăрсен обществин территорири пуçламăш организацийĕн черетлĕ отчетпа суйлав пухăвĕ иртрĕ. Кун йĕркинче малтан организацин юлашки виçĕ çулхи ĕç отчетне, ревизи комиссийĕн отчетне итлерĕç, унтан бюрон çĕнĕ составне тата унăн председательне суйларĕç. Пухăва хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕн культурăпа социаллă ыйтусем енĕпе ĕçлекен çумĕ Н.Х.Абдуллин, социаллă хӳтлĕх управленийĕн начальникĕ Л.Н.Дильмухаметова, ВОСăн республикăри правленийĕн представителĕ Р.Г.Гардиев, çаплах районти тĕрлĕ предприятисен, организацисен, ведомствăсен представителĕсем хутшăнчĕç.**

Юлашки виçĕ çул, унччченхи пекех суккăр çынсем, начар курнипе инвалида тухнă çынсем обществăлла ĕçе активлă хутшăнас, хăйсен професси шайне ӳстерес тесе тăрăшнипе палăрнă. Çапла, икĕ яш Кисловодск хулинчи специализациленĕ медучилище вĕренме кĕнĕ, организацин пилĕк членĕ хваттер илнĕ, ултăшне çурт туса панă тата ытти те. Анчах та çав вăхăтрах татса паман ыйтусем чылай, вĕсен сăлтавĕ, паллах, укçа-тенкĕ çитменнинче. Хăш-пĕр ыйтусене вĕсем пăхăнса тăракан ертӳçĕсем пулăшнипе татса панă. Тĕслĕхрен, чексемпе туянакан апат-çимĕç таварĕсен ассортиментĕнче питĕ чухăн пулни çинчен çăхав пулнă. Сывлăх япăххисемшĕн ВТЭК инçе - Нижнекамск хулинче вырнаçни те йывăрлăхсем кăларса тăратать. Çав кун çаплах ĕçе вырнаçасси, эмелсем туянмалли çăмăллăхсем, вырăнти радио юсавсăр пулни, çурт-йĕр кирли çинчен нумай калаçрĕç. Пухăва хутшăннă ертӳçĕсем, тĕрлĕ служба представителĕсем вĕсен ыйтăвĕсене татса пама хăйсенчен мĕн килнине пурне те тума шантарчĕç.

Пухура пуçламăш организацин ĕçне лайăх хак пачĕç, унăн çĕнĕ председателĕ пулма Зинаида Игнатьевна Богданована суйларĕç.

Суйлав хыççăн юбилярсене чысларĕç, вĕсене парнесем пачĕç. Кайран вара пуçтарăннисене районти культура ĕçченĕсем концерт кăтартрĕç.

**К.ЯМАЛЕТДИНОВА.**

---



*Паллашăр: нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленири скважинăсене юсакан цех операторĕ Андрей Николаевич Стручков.*

***Унăн пурнăç çулĕ хăйпе пĕр çулхисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть: шкул - çар - производство. Анчах та çине тăни, тĕллевлĕх пулни ăна пурнăçра хăйĕн вырăнне тупма пулăшнă. Хусанти механикăпа техника техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, 1988 çулта вăл нефть промышленноçĕнче ĕçлеме тытăннă. Андрей Николаевич 1993 çултанпа НГДУра скважинăсене çĕр айĕнче юсакан цехра вăй хурать, халь Р.Хаджимуратовăн бригадинче V разрядлă оператор пулса ĕçлет. Ăслă, хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен специалист ĕçри юлташĕсен хисепне тивĕç пулнă.***

*Н.Квашнина сăнӳкерчĕкĕ.*

---

**• Тĕнче тавра**

### Хăнăхманни лайăхрах

Канадăри Онтарио хулин влаçĕсем лавккасенче вылямалли АК-47 автоматсене сутма чарнă. Пăхма вĕсем чăн-чăннисене аса илтереççĕ. Кунашкал йышăнăва чи малтанах ача-пăча кăмăл-сипетне хӳтĕлекен общество хистенипе тунă. Юлашки çулсенче çын вĕлернĕ тĕслĕхсенчен 45 процентĕнче "Калашников" автоматпа усă курнă.

### "Симĕс" çумăр

Сан-Францискăри шкулсенчен пĕринче вĕренекенсем уроксене пăрахсах кĕпер çинче доллар пуçтарма тытăннă. Банк çаратнă вăрă-хурах "симĕс" çумăр çутарнă. Вĕсем укçаллă сумкăсене машинăна ывăтнă чух ятарлă пакетсенчен пĕри шаплатса ӳкнĕ те сирпĕнсе кайнă. Укçа-тенкĕ вăрласа каястăвас пулсан вĕсене çакнашкал хӳтлĕхпе тивĕçтернĕ-мĕн. Долларсем урамра вĕлкĕшме пуçланă. Шкул ачисем вăтамран 4,5 пин доллар пуçтарнă, тупăша полицие ăсатнă.

# Ăçта-ши эс, Тăван çĕршывăм?

Кашни çулах çапла: нихçан таврăнми ачалăхăн ахрăмĕ пек чуна пырса тивекен саслă тăрнасем тăван çĕршывалла карталансан, чĕре каллех канăçне çухатать. Мĕнпех танлаштарайăн-ши тăван кĕтес туртăмĕн вăйне? Ачалла шуйхануллă хаваслăхĕ те, каçхи шăплăха çуракан чан сасси пек чуна витерекен ыратăвĕ те пур унта. Çулсем иртнĕ май, те чĕре суранĕсем уçăлнăран, çу иртнĕ хыççăн тӳпене кĕрхи хура пĕлĕтсем сырса илнĕн, çав ырату вăйланнăçемĕн вăйлăланать. Вăрăм кун-çул урлă иртсе ырса çитнĕ чун хăй ыратăвне пула ачалăхри пек каллех хӳтĕлевсĕр те чечен; тӳрккес чĕлхерен асăрханмасăр вĕçĕрĕннĕ сивĕ сăмах та ылçен йĕппи пек чĕрене тăрăнса кив сурана уçса яма пултарать. Çав нимпе те сиплеме çук ыратăва пулах çухалнă канăçа шыраса этем тăван çĕршывне туртăнать: тăван анне çут тĕнче курма ăçта чун панă, çавăнтах пытаннă-ши канăçлăхĕ? Апла пулсан часрах, часрах çитесчĕ унта...

Николай Ивановичăн кăмăл-шухăшне сиснĕнех, шофер йĕпе юр тăманне пăхмасăр машинине каçхи çулпа хăвалать. Çуркунне хăй ăшшипе ир савăнтарайманрĕ кăçал. Кашни япалан хăйĕн йĕрки пур çав. Çав йĕркене тытса тăракан килĕшӳллĕхе çухатсан çутçанталăкĕ те пăсăлать. Николай Плониш ача чух Çарăмсан таврашĕнче тăрнасем чылайччĕ. Халĕ вĕсене сайра курма пулать, çавна пулах çĕленĕсем йышланса кайрĕç. Этемлĕхре те çаплах: çывăхрине хисеплеме пĕлменни хăй те çынлăхран тухать. Сипетлĕх туйăмне упрама пĕлмесен халăхра сипетсĕрлĕхĕ çум-курăк пек пусса илет. Ача чухнехи кӳренӳ ĕмĕрлĕхех юлать-ши - çичĕ çулта чух Çимун пиччĕшĕпе кĕтӳ пăхма тухсан еплерех вăтаннине хăй те манаймасть Николай Иванович. Кĕтӳçĕ тени ун чух çын хисепĕнче пулман-çке. "Санăн ачусем ĕнене суса ĕçнĕ, сĕт анмасть", - тесе сăлтавсăрах сăмахне илтнĕрен амăшĕн куçĕ час-часах йĕпеннĕ. Çавăнпах Куля ӳссен ятлă-сумлă çын пулма мĕнле те пулсан пысăк пĕлӳ илме ĕмĕтленнĕ. Халĕ апла мар, ваттисуммине те асăрхасшăн мар ялта. Йышлă ача çитĕнтернĕ, сакăр вунна çывхарнă мучи шыв ăсма талкăшса тухнине курса, хăвнах ăстараççĕ-и тесе ыйтнăччĕ те, сайра хутра кăна хĕнесе илнишĕн те тавах - хуравланăччĕ лешĕ. Ĕмĕрне чыслă пурăнса иртнернĕ атте-аннене хисеплеме вĕрентеймерĕмĕр пулсан çамрăк ăрăва, халăхăмăр хисепре пуласси çинчен калаçмалли те çук.

Чи ырă вăхăт пек асра юлчĕ Николай Ивановичшăн Миргород хулинче вĕреннĕ тапхăр. "Эпĕ Гоголь çуралнă вырăнтан, эпĕ Шевченко çĕршывĕнчен...", - тесе мăнаçланса калаçнине час-часах илтме пулатчĕ украин çамрăкĕсем хушшинче. Пĕррехинче Куля та хăй камне пĕлтерес тесе çак тавралăхра çуралнă Державин, Шишкин ячĕсене аса илнĕччĕ. Сидоренко студент йĕкĕлтес шутпа: "Эсĕ - Хусан тăлăхĕ", - тесе персе янăччĕ. Сасартăк тытăçса ӳкнĕ икĕ çамрăка юлташĕсем уйăрса яричченех пĕр-пĕрин тумне ним юлми çуркаласа тăкма та ĕлкĕрнĕччĕ. Çакăн хыççăн Сидоренкопа Куля шыв сапсан та уйăрăлми туссем пулса тăчĕç. Мĕн вĕренсе пĕтеричченех пĕр-пĕринпе çавтăнса - Сидоренко украин халăх юррине, Куля хăйĕнне юрласа - утнине курсан, пĕрле вĕренекенĕсем ахăлтатсах кулатчĕç, мĕншĕн тесен вĕсем иккĕшĕ мĕнле майпа туслашса кайнине пурте пĕлетчĕç. Ятне никам умĕнче те çĕре ӳкермен халăх хăй пеккинех хисеплет çав.

Чылай çул иртсен шăпа тени Николай Ивановича каллех çав енчи халăхпа тĕл пултарчĕ. Кĕçĕн хĕрне Юльăна валли - Воронежри оперăпа балет театрĕн балеринине çак хула çывăхнерех çурт илме кайсан, чăн-чăн артисткăна курма тесе çынсем ятарласа тухатуха пăхрĕç, тараватлăн пăхса йăл кулчĕç. Ял Советĕнче лараканĕсем Николай Иванович тава тивĕçлĕ паллă художник пулнине пĕлсен, Юльăпа пĕрле ăна та хăйсем патне пурăнма йыхăрма тытăнчĕç: чи хисеплĕ çын пулатăр поселокра, мĕн кирлине хуçалăх валли пурне те тупса парăпăр - килĕр кăна, сирĕн пек çынсем çĕрте выртса çӳреместĕ... Вĕсен сĕнĕвĕпе килĕшсе те, хирĕçлесе те - нимех те хуравлаймарĕ ун чух Николай Иванович, тăван çĕршывшăн чунĕ хурланнăран, хамăр халăхаччĕ çакăн пек тараватлăн, тесе кăна шухăшласа илнĕччĕ.

Çапла пурнăçри хăшпĕр самантсене аса илсе, шухăшласа пырса тăван ене çывхарса пынă чух яланах çапла - чĕрери шуйханăвне пытарма тăрăшрĕ вăл. Пĕчĕк машина каçхи çула çутатса Хиртикӳлти Совет Союзĕн паттăрне Муса Джалиля халалласа лартнă палăк умĕпе иртрĕ. Кăшт вăхăтран, Нурлата кĕрсе Аслă вăрçăра пуç хунисене асăнса лартнă палăк патĕнчен çаврăнса тухса, Хăмăшлă ял еннелле чуптарчĕ. Йĕпе юрпа витĕннĕ çул çине тимлĕн пăхса пыракан шофершăн хăйпе юнашар ларса пыракан кĕмĕл çӳç-сухаллă çын шăпах çак палăксене çамрăк чух тума пултарни, шухăшĕнче те пулмарĕ курăнать. Çак ялти хăшĕ-пĕрисемшĕн пекех, Чăваш культура министерстви тата художниксен союзĕ Н.И.Плониш çуралса ӳснĕ çуртйĕр вырăнне музей тума упрама ыйтни, тен, уншăн та кирлĕ мар япала çеç. Ун пек çынсене ку çĕр лаптăкĕ мĕн хака тăма пултарни ытларах кăсăклантарать. Ыран тата пуласлăхра мĕн кĕтме пултарни - вĕсен ĕçĕ мар тейĕн. Хăмăшлă ялĕ вырăнне урăхла ят çапса хурсан та çаплах ним шухăшсăр иртĕçши? Капла хамăр камне те манăпăр...

Николай Иванович çулĕсенчисен асĕнче кăна юлма пултарнă. Çарăмсан таврашĕнчи, Хăмăшлă шывĕ хĕррийнчи илемлĕ вырăнсем искусство произведенийĕсем пулса пĕтĕм тĕнчипех саланчĕç. "Çутçанталăкăн çакăн пек илемлĕ вырăнĕнче чăн-чăн искусство çынни çуралмасăр пултарайман та", - пĕлтернĕччĕ хăй шухăшне пĕр паллă çыравçă Мускаври выставкăна курма пырсан. Унăн сăмахĕсене Николай Иванович ялта пĕрле ачалăхне иртернĕ тантăшне каласа парсан, лешĕ вара: "Ăçташи пирĕн, Куля, ачалăхăмăрти тăван çĕршыв? Ăна ĕне çисе янă пуль... Камсем çуралĕçши малашне унта?" - терĕ алне сулса, Çарăмсанăн паянхи шăпи пирки пăшăрханнăран.

...Çур çĕр иртни пĕр сехет. Шофер хăй пассажирне кирлĕ çĕре илсе çитерчĕ, ĕçне туса çаврăнса каялла вĕçтерчĕ. Хăмăшлă çывăрать-ха. Мĕнле шухăшкăмăлпа вăранĕ-ши ирпе?

**ЕЛЕНА АДОНЕ.**





**Н.И.Плонишăн ӳкерчĕкĕсенче: "Ырă кун, Юлия". Америкăри уйрăм çын музейĕнче упранакан 15 произведенирен пĕри. "Ырă ачалăх".**

# Яла - шанчăклă хӳтлĕх

Ялсенче объектсемпе пурăнмалли çурт-йĕре вут-кăвартан сыхлассине тивĕçтерессин тĕп ыйтăвĕсенчен пĕри - пушарсене сӳнтерессине йĕркелесси. Паян районта 30 хуçалăхран 5-шĕнче пушар техники тата вут-çулăма сӳнтермелли хатĕрсем çук. Юлашки 5 çулта Пĕкĕлмери РМЗа хуçалăхсенчен ансатлатнă автоцистернăсем çĕнĕрен оборудованилеме ГАЗ-62, 53 маркăллă пĕр автомобиль те ăсатман. Хуçалăхсене пушар автомобилĕсемпе япăх тивĕçтерни, райцентртан инçе вырнаçни, начар çыхăну вут-çулăм хăвăрт аталанасси патне илсе пырать тата пысăк сиен кӳрет. Юлашки 3 çулта кăна районти ялсенче 132 пушар регистрациленĕ.

Вут-кăварпа кĕрешессинче ирĕклĕ пушар хуралне йĕркелесси пысăк вырăн йышăнать. Çапах та ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем пушар деповĕсем (телефонпа тата радио çыхăнăвĕпе тивĕçтернĕскерсем) тăвассине, пушар машинисем е ансат техника, вут-çулăма сӳнтермелли мотопомпăсем тата автотехника туянассине, ДПО членĕсем талăкĕпе дежурствăра тăрассине йĕркелессине, пушар кӳллисем тăвассине çителĕклĕ тимлĕх уйăрмаççĕ. Паянхи кун тĕлне ял хуçалăх предприятийĕсенче пушар хуралне йĕркелени çавнашкал.

"Киклĕ", "Сĕнче" ассоциацисенче, "Лесная Поляна" ОООра, Агропромбанкăн хушма хуçалăхĕнче, "Нурлатнефтепродукт" АО хушма хуçалăхĕнче **пушар техники çук.**

"Киклĕ","Рассвет" хуçалăхсенче, сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче, "Нурлатнефтепродукт" АО хушма хуçалăхĕнче **талăкĕпе дежурствăра тăрассине йĕркелемен.**

Çурт-йĕр тăвакан тата юсакан участокăн хушма хуçалăхĕнче, "Комбайн", "Правда", "Черемшан" ассоциацисенче, сĕт-çу комбиначĕн, "Нурлатнефтепродукт" АО хушма хуçалăхĕсенче **пушар техники юсавлă мар.**

Пушар техникине час-часах ăшăтман çуртра, пĕрлехи гаражсенче е механика картишĕсенче упраççĕ, унпа тĕллевлĕ усă курмаççĕ, çавна пула вăхăтсăр юрăхран тухать.

Хуçалăхсен ертӳçисем лару-тăрăва майласа ярас тĕлĕшпе мĕнпур мерăсене йышăнмалла.

**Н.ЗАХАРОВ,**
**Нурлатри ПЧн ИГПН начальникĕ.**

# Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕр çиттĕрех

Çичĕ çулхи хĕрача, çӳçне бантпа тыттарнăскер, кăткăс нота тăсать, кайран вара юратнă сăввине вулать. Унăн искусствăсен шкулĕнче вĕренес килет, çавăнпа та вăл питĕ тăрăшать. Юлташĕсем амăшĕсемпе пĕрле хăйсен черетне чăтăмлăн кĕтеççĕ. Ку Нурлатри музыка шкулĕнче консультаци пынине пĕлтерет. Темиçе кун каярах вара экзаменсем пуçланчĕç.



1998 çулта шкултан вĕренсе тухнисен альбомĕнчи сăнӳкерчĕк.

- 1998-1999 вĕренӳ çулне кăçал эпир конкурс тăрăх йышăнтăмăр, - каласа парать директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ Люция Мухтаровна Гизатуллина. - Малтан преподавательсем ачасемпе тĕплĕн ĕçлерĕç, ритм туйăмне, интонаци тĕрĕс пулнине, музыка ăнкарăвне тата пысăк туйăмлăх шайне палăртрĕç. Экзаменсене уйрăмшарăн тытрĕç. Вĕренме кăмăл пуррисем чылайччĕ, анчах та фортепиано уйрăмне 12 çын, халăх инструменчĕсен - 10 тата хореографи уйрăмне 23 çын йышăнтăмăр. Акă списокне те çакнă, куратăри, ачасем кăсăкланаççĕ. Пирĕн пата мĕнпур шкулсемпе микрорайонсенчен килнĕччĕ, анчах та эпир чи пултаруллисене çеç суйласа илтĕмĕр.

Кăçал музыка шкулĕнче йăлана кĕнĕ дисциплинăсемсĕр пуçне, сăнарлă искусство та вĕрентĕç. Кунта 8-9 çулхи ачасене йышăнĕç, вĕсем 4 çул вĕренĕç, халь вара пулас живописецсем хăйсен ӳкерчĕкĕсене кăтартма хатĕрлеççĕ. Ачасене ятарлă диплом илнĕ специалист вĕрентĕ, унăн ĕçĕсемпе нурлатсем нумаях пулмасть иртнĕ районти учительсен художество творчествин выставкинче паллашрĕç.

Кăçал музыка шкулне 27 çын пĕтернĕ, çав шутра 6 баянист. Пианистсем, яланхи пекех, нумайрах - 21 çын. Тăваттăшĕ - Лилия Мухаметзянова, Катя Шугаева, Лейсан Исхакова тата Даша Бикинеева - отличниксем. Катьăпа Лейсан музыкăна малалла вĕренме шутлаççĕ, специальноçпа экзаменсем панă ĕнтĕ - Нурлата Альметьевскри музыка училищин преподавателĕ ятарласа килнĕччĕ. Шкул пĕтернине халалланă уяв каçĕ май уйăхĕнчех пулнă, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсеннинчен пĕр уйăх маларах. Уяв концерчĕ те, аттестатсем пани те, чечексем, асăнмалăх сăнӳкерчĕксем те пулнă. Йăлана кĕнĕ тăрăх, кашни ачана кунта альбом параççĕ, унта преподавательсен тата пĕрле вĕреннĕ юлташĕсен сăнӳкерчĕкĕсем. Çирĕм çул иртнĕ хыççăн кăçал вĕренсе пĕтернĕ хĕр çак альбома уçса пăхĕ те ăна Музыка тĕнчине пĕрремĕш утăмсем тума пулăшнисене тав туса асăнĕ.

Музыка, рисовани çыннăн пултарулăхне аталантарма, çут тĕнче илемлĕхĕпе ăс-хакăлне ăнланма пулăшаççĕ. Хореографипе кăсăкланни вара? Ташă ăсталăхне алла илес текенсем утма та çăмăл, илемлĕ утаççĕ. Ку вара пирĕн ачасене, уйрăмах хĕрачасене питĕ кирлĕ. Концерт вăхăтĕнче хăйсене тыткалама вĕренеççĕ.

Кăçалхи çул преподавательсен коллективĕшĕн ытти çулхисенничен уйрăлса тăрать. Искусствăсен шкулĕ çамрăк талантсен çĕнĕ ăрăвне кĕтсе илме активлă хатĕрленет. Концерт роялĕ туяннă. Ан тив, вĕсемшĕн кăçалхи вĕренӳ çулĕ ăнăçлă пултăр.

Т.АЛЕКСЕЕВА.

## Саламлатпăр!

*Сосновка ялĕнче пурăнакан юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçее Кузьма Степанович ЕГОРОВА 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.*

*Ытарайми атте сăнарĕ*
*Кирек хăçан та чĕрере.*
*Паян вăл утмăл тултарчĕ,*
*Çитме сунар ăна çĕре!*

*Мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем.*

## Пĕлтерӳсем

*1992 çулта туса кăларнă, 37000 километр çӳренĕ ВАЗ-21063 сутăнать. Якуркелĕнчи Анатолий Михееввран е 4-02-12 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Наркодел - куракăсенчен хатĕрленĕ эрех ĕçнинчен сиплекен чей. Анонимлă та йышăнма пултараççĕ. Туянас текенсем районти культура çуртĕнче ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*1992 çулта туса кăларнă, 73000 пин километр çӳренĕ, хура тĕслĕ ВАЗ-21053 сутатпăр, 5 сыпăклă КПП, люк. Салтакъелĕнчи Марат Гимаевран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*9,5х5,5 метрлă çурт пури сутăнать, туса пĕтермелли материалсем те пур. Çарăмсан районĕнчи Ульяновка ялĕнчи Куприян Филимоновран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*1983 çулта туса кăларнă, капиталлă юсав иртнернĕ ВАЗ-2106 сутатпăр, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. 3-12-33 номерлĕ телефонпа е çĕр комитетĕнче ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Лайăх шайри çурт сутăнать. Телефон: 2-27-52.*

* * *

*Тасатакан çĕнĕ сооруженисем çывăхĕнче капиталлă гараж сутăнать. Телефон: 5-26-95.*

* * *

*Полевая урамĕнчи 11-мĕш номерлĕ çурта сутатпăр е пĕр пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. Телефонсем: 5-20-74 (килти), 2-13-95 (ĕçри).*

* * *

*Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Циолковский урамĕ, 7-88, Александр Харитонов.*

* * *

*ВАЗ-2101 сутăнать, хаклă мар. Адрес: Чапаев урамĕ, 6-11 (16 сехет хыççăн).*

* * *

*Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер, "Восход 3м-01" мотоцикл, усă курнă çемçе сĕтел-пукан сутатпăр. Телефонсем: 5-28-34, 5-20-04.*

* * *

*Прицеплă Т-40 трактор (вездеход) сутатпăр, хакĕ 20 пин тенкĕ. Адрес: Школьная урамĕ, 92.*

* * *

*1977 çулта туса кăларнă лайăх шайри ВАЗ-2101 сутатпăр. Мамăк ялĕнчи Октябрьская урамĕнчи С.Д.Прокудинран е 4-13-55 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Хĕвелтухăç микрорайонĕнче никĕслĕ участок сутăнать. Телефон: 5-17-99.*

* * *

*Телевышка çывăхĕнче лайăх гараж сутăнать. Телефон: 2-17-60 (ĕçри).*

* * *

*Хула варринче пур енчен те хатлă 3 пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: К.Маркс урамĕ, 6-42. Телефонсем: 5-33-62 е 5-17-04, 20 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

**Улах юррисем**

## *Шур супăньпе çуса ярас пулсан*

**Шур пӳртĕре хутсан иртерех хут,**
**Кăвак тĕтĕм кайтăр çӳлелле.**
**Улаха тухсассăн лăпкă çӳре,**
**Лайăх яту кайтăр ял çине.**

**Шур хăмат çип чăлха, хĕлĕх пушмак -**
**Еплеех пусам-ши юр çине?**
**Пĕвĕм те çук манăн, тĕсĕм те çук -**
**Еплеех çӳрем-ши çын çинче?**

**Хурчăка хурама, ай, тăрринче,**
**Ик çуначĕ пĕлĕт хушшинче.**
**Пĕвĕм çӳрет ыр çын, ай, умĕнче,**
**Айван чунăм турă аллинче.**

**Машинăсем мамăк, ай, арлаççĕ,**
**Çипписем чăрканни курăнмасть.**
**Манăнах та ăшра, ай, вут çунать,**
**Çулăмĕсем тухни курăнмасть,**

**Шур юр çине çунă шур йăлтăркка**
**Хĕвел хĕртсе пăхнипе пĕтес çук.**
**Çамка çине çырнă, ай, хурлăха**
**Шур супăньпе çуса ярас çук.**
**Шур супăньпе çуса ярас пулсан,**
**Пĕр хут мар - çичĕ хут çăвăттăм.**

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

## Тупма пулăшăр!

**Тутарстан Республикинчи Алексеевски районĕнчи Шамы ялĕнче пурăнакан Дмитрий Минсафович Уленгова, 1930 çулта çуралнăскере, шыраççĕ. Вăл 1998 çулхи июнĕн 6-мĕшĕнче килĕнчен тухса кайнă та таврăнман. Тĕрĕслемен даннăйсем тăрăх, ăна Нурлат территорийĕнче курнă.**

**Уйрăм паллăсем: вăтам пӳллĕ, ырхан, çӳçĕ шуралнă; кăкăрĕ çинче "Ăмăрткайăк" татуировка; сылтăм алли çинче "Эра" наколка; шăлĕсене лартнă, тимĕр.**

**Пир-авăртан çĕленĕ хура костюм, тĕттĕм кăвак шăлавар, хура карттус, кăвак тĕрĕллĕ лавсан кĕпе тăхăннă, урисенче калуш е кроссовки пулнă.**

**Çӳлерех асăннă çынна куракансене е вăл ăçта пулнине пĕлекенсене 02, 2-11-25, 2-12-32 (уголовнăй шырав) номерлĕ телефонсемпе милицие пĕлтерме ыйтатпăр.**

**Анонимлăх шантаратпăр.**

## Пĕлтерӳсем

***<u>4676 номерлĕ перекет банкĕн хисеплĕ ссудозаемщикĕсем.</u>*** ***Раççей Федерацийĕн "Уйрăм çынсен тупăшне хуракан налук çинчен" калакан законĕпе, РФ ГНС 35-мĕш номерлĕ инструкцийĕпе гражданин ссуда пек илнĕ укçана, процентпа шутланă уйрăмлăх тупăшне налук хураççĕ. 2-25-88, 2-21-21 номерлĕ телефонсемпе тĕплĕнрех ыйтса пĕлме пулать.***

* * *

***70000 километр çӳренĕ ВАЗ-2105 сутăнать. Телефон: 5-17-66.***

* * *

***Кухня гарнитурĕсем, сĕтел-пукан (хаклă мар) сутатпăр, Польша-Германи. Çаплах телевизорсем, "Panasonik" видиксем (Япони) сутатпăр. Леçсе пама та пултаратпăр. Свидетельство <u>147778 номерлĕ. Телефон: 5-22-20 (каçпа).</u>***


**Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.**
**Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.**

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, явапла секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 892. З. N 2724.